

# СУЯ ТĔН ПĔТЕССИ ÇЫВĂХ!

- Мĕн вăл суя тĕн?
- Мĕнле вăл пĕтет?
- Çакă сире мĕнле пырса тивет?

## Мĕн вăл суя тĕн?

**Тĕн ячĕпе тунă преступленисем сире тарăхтармаççĕ-и? Турăшăн ĕçлетĕп тесе калакансем вăрçăсенче тата терактсенче хутшăнни сирĕн ăшăрта тĕрĕслĕх туйăмне çуратмасть-и? Тĕн пуçлăхĕсем сутăнчăкла тытни сире тарăхтармасть-и? Мĕншĕн проблемăсен сăлтавĕ тĕнре тăрать?**

**Пĕтĕм йĕркесĕр ĕçсемшĕн пур тĕн те явап мар, *суя* тĕн кăна. Иисус Христос — ĕненекенсенчен нумайăшĕ ăна тараннăн хисеплеççĕ — суя тĕн, çĕрĕк йывăç пек, «начар çимĕç тăвать» тесе каланă (Матфей 7:15—17). Суя тĕн мĕнле çимĕçсем тăвать?**



### Суя тĕн...

■ **ВĂРÇĂСЕНЕ ТАТА ПОЛИТИКĂНА ХУТШĂНАТЬ:** «Пĕтĕм Азия тăрăх тата унăн тулашĕнче те тĕн пуçлăхĕсем влаçшăн кĕрешнĕ чухне хăйсен чиркĕвĕсене çӳрекенсен тĕн туйăмĕсемпе намăсăррăн усă кураççĕ» тесе каланă «Эйшауик» журналта. Журнал малалла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Пирĕн тĕнче хуллен-хуллен ухмаха тухса пырать». Америкăри пĕр паллă тĕн деятелĕ пĕлтернĕ: «Террористсен йĕркесĕр ĕçĕсене чарас тесен вĕсене вĕлермелле». Унăн кĕрешмелли меслечĕсем мĕнле? «Пирĕн Çӳлхуçа ячĕпе вĕсене пурне те сирпĕтсе ярăр!» тесе чĕннĕ вăл. Библире урăх майлă каланă: «Хăй тăванне кураймасăр тăрса, "эпĕ Турра юрататăп" теекен суеçĕ» (1 Иоанн 4:20). Иисус вара çапла каланă: «*Хăвăр тăшманăрсене юратăр*» (Матфей 5:44). Вăрçăсене хутшăнман тĕнсенчен мĕн чухлĕ тĕн тупма пулать?

■ **СУЯ ВĔРЕНТӲСЕМ САРАТЬ:** Тĕнсенчен нумайăшĕ чун е чун-чĕм çын вилсен унăн кĕлеткинчен тухса каять те малалла пурăнать тесе вĕрентеççĕ. Çак вĕрентӳпе усă курса, нумай тĕнсем вилнисен чунĕсемшĕн кĕл тунишĕн хăйсен чиркĕвĕсене çӳреннисенчен укçа илсе пуяççĕ. Анчах Библи пачах урăхла вĕрентет. *«Çылăх тăвакан чун — вăл вилĕ»* (Иезекииль 18:4). «Чĕррисем хăйсем вилессе пĕлсе тăраççĕ, вилнисем вара нимĕн те пĕлмеççĕ» (Екклесиаст 9:5). Иисус вилнисем чĕрĕлсе тăрасси çинчен вĕрентнĕ,— çынсен вилĕмсĕр чун пур пулсан, çакă ниме те кирлĕ марччĕ (Иоанн 11:11—25). Сирĕн тĕнӳ чун вилмест тесе вĕрентет-и?

■ **ИРСĔР АР ХУТШĂНĂВĔСЕНЕ СИВЛЕМЕСТ:** Хĕвеланăç çĕршывĕсенче хăш-пĕр чиркӳсенче чиркӳ ĕçченĕсем пулма гомосексуалистсене тата лесбиянкăсене лартаççĕ, çавăн пекех вĕсем, арçынпа арçына тата хĕрарăмпа хĕрарăма мăшăрланма ирĕк паччăр тесе, правительствăсене хистеççĕ. Ирсĕр ар хутшăнăвĕсене айăплакан чиркӳсем те хăйсен священникĕсем ачасемпе ар хутшăнăвне кĕнине сивлемеççĕ. Библи вара мĕне вĕрентет-ха? Вăл уççăн калать: «*Ан улталанăр: ясар çынсем те, кĕлеткесене пуççапакансем те, аскăн ĕç тăвакансем те, хăйсем тĕллĕн асакансем те, арпа асакан арçынсем те... Турă Патшалăхне кĕреймĕç*» (1 Коринф 6:9, 10). Эсир ирсĕр ар хутшăнăвĕсене пулма ирĕк паракан тĕнсене пĕлетĕр-и?

Çĕрĕк çимĕçсем парса тăракан тĕнсене мĕн кĕтсе тăрать? Иисус асăрхаттарнă: «Ырă çимĕç туман йывăçа кирек хăшне те, касса, вута пăрахаççĕ» (Матфей 7:19). Çак сăмахсем тăрăх, суя тĕне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтерĕç тата тĕп тăвĕç! Анчах çакă мĕнле тата хăçан пулса иртет? Çак ыйтăвăн хуравне Библири Апокалипсис ятлă кĕнекен 17-мĕшпе 18-мĕш сыпăкĕсенче çырса хунă.

Суя тĕн «çĕр çинчи патшасене» витĕм кӳрсе тăрать



## Суя тĕн мĕнле пĕтет?

Шухăшласа пăхăр-ха: хăрушă тискер кайăкăн çурăмĕ çинче аскăн хĕрарăм ларать. Тискер кайăкăн çичĕ пуçпа вунă мăйрака пур (Апокалипсис 17:1—4). Кама çак аскăн хĕрарăм сăнарласа парать? Вăл «çĕр çинчи патшасене» витĕм кӳрсе тăрать. Вăл пурпурпа йăмăх хĕрлĕ пусма тăхăннă, фимиампа усă курать тата çĕрме пуян. Çитменнине тата, унăн асамçă ĕçĕсемпе «*пур халăх* та аташса кайнă» (Апокалипсис 17:18; 18:12, 13, 23). Çак аскăн хĕрарăм пĕтĕм тĕнчери суя тĕнĕн империйĕ пулнине пире Библи ăнланма пулăшать. Çак хĕрарăм çĕрĕк çимĕçсем парса тăракан пĕр тĕне кăна мар, пур тĕне те пĕлтерет.

Аскăн хĕрарăм ларса çӳрекен тискер кайăк вăл – пĕтĕм тĕнчери политика вăйĕсем* (Апокалипсис 17:10—13). Суя тĕн, çак политикăлла тискер кайăк мĕн шут тытни çине витĕм кӳрес тата ăна хăйне пăхăнтарас тесе, ун çинче ларать.

Анчах тĕлĕнмелле улшăнусем килеççĕ. Библире каланă: «Тискер кайăк çинче эсĕ курнă вунă мăйрака аскăн арăма курайми пулĕç, ăна тустарса пĕтерĕç, çарамас хăварĕç, унăн ӳтне çисе ярĕç, ăна вутпа çунтарса ярĕç» (Апокалипсис 17:16). Кĕтмен çĕртен çак тĕнчен правительствисем суя тĕн çине хаяррăн тапăнĕç те ăна тĕп тăвĕç. Çакна тума вĕсене мĕн хистĕ? Библире, Апокалипсис кĕнекинче, каланă: «*Турă* вĕсен чĕрисене *Хăй* ирĕкне тăвас енне янă» (Апокалипсис 17:17). Çапла ĕнтĕ, Турă хăйĕн ячĕпе тунă усал ĕçсемшĕн суя тĕне явап тыттарĕ. Турă, хăйĕн пĕр çитменлĕхсĕр тĕрĕслĕхĕпе килĕшӳллĕн суя тĕнĕн политика еркĕнĕсемпе усă курса, хăйĕн приговорне пурнăçлĕ.

Суя тĕнпе пĕрле пĕтес килмест пулсан, сирĕн мĕн тумалла? «Эй халăхăм, ун патĕнчен тух» тесе чĕнет Туррăн хыпарçи. Шăпах халĕ суя тĕнрен тухмалли вăхăт! Ăста-ха хӳтлĕх шырамалла? Тен, атеизмра? Анчах унăн та пуласлăх çук (2 Фессалоникăсем 1:6—9). Чăн тĕн кăна чăн-чăн хӳтлĕх пулма пултарать. Анчах ăна мĕнле уйăрса илмелле?

«Эй халăхăм, ун патĕнчен тух»

* Çак ыйтăва тĕплĕнрех ăнлантарнине Иегова Свидетелĕсем пичетлесе кăларнă «Апокалипсис: унăн аслă апогейĕ çывăх!» (вырăсла) кĕнекере тупма пулать.



# Чăн тĕне мĕнле уйăрса илме пулать

**Чăн тĕнĕн мĕнле ырă çимĕçсем парса тăмалла? (Матфей 7:17).**

## Чăн тĕн...

■ **ЮРАТУ КĂТАРТАТЬ:** Турра чăнлăхпа пуççапакансем «тĕнченĕн мар». Вĕсен хушшинче расăсемпе нацисем çине пайланса каясси çук. Вĕсем пĕр-пĕрне юратаççĕ (Иоанн 13:35; 17:16; Апостолсен ĕçĕсем 10:34, 35). Вĕсем пĕрле ĕненекенсене нихăçан та вĕлерме тăмĕç, пачах урăхла, вĕсемшĕн хăйсен пурнăçне те пама хатĕр (1 Иоанн 3:16).

■ **ТУРĂ СĂМАХНЕ ШАНАТЬ:** Чăн тĕн «йăласене» тата «этем ӳкĕчĕсене» вĕрентмест, унăн вĕрентĕвĕсем пурте Турă Сăмахĕ, Библи, çинче никĕсленнĕ (Матфей 15:6—9). Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен «Турă Çыруне пĕтĕмпех Турă Сывлăшĕ пĕлтернипе çырнă; вăл усăллă: вăл вĕрентет, питлет, тӳрлетет» (2 Тимофей 3:16).

■ **ÇЕМЬЕСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТЕТ ТАТА НРАВСТВЕННОСТЬ НОРМИСЕНЕ ÇӲЛЛĔ ШАЙРА ТЫТСА ТĂРАТЬ:** Чăн тĕн упăшкасене «хăйсен арăмĕсене хăйсен тăл-пӳне юратнă пек юратма» хавхалантарать, арăмсене «упăшкисене тарăннăн хисеплемеллине *(ÇТ)*» аталантарма пулăшать, ачасене вара хăйсен ашшĕ-амăшĕсене пăхăнса тăма вĕрентет (Эфес 5:28, 33; 6:1). Унсăр пуçне тата, кама власть панă, вĕсен нравственность енчен тĕслĕх кăтартмалла (1 Тимофей 3:1—10).

Мĕнле тĕн çаксене пурне те тытса тăрать? 2001-мĕш çулта кăларнă «Холокост Политики» кĕнекере каланă: «Çынсенчен нумайăшĕ Иегова Свидетелĕсем пек пурăннă пулсан, тата çак ĕненекен çынсем мĕн вĕрентсе çӳренине ĕненнĕ пулсан, тĕнчере, чăннипе каласан, халăхсен хăйсен хушшинчи уйрăмлăхсемшĕн пĕр-пĕрне пĕтерессi пулмастчĕ» (Holocaust Politics).



**Иегова Свидетелĕсем 235 çĕршывра Библи принципĕсем çинчен вĕрентсе çӳреççĕ кăна мар, çавăн пекех вĕсене пурнăçра тытса пурăнаççĕ. Турă мĕн тума ыйтнине пĕлме тата ăна мĕнле юраса пурăнма пулăшас тесе, эпир сире Иегова Свидетелĕсемпе калаçма хавхалантаратпăр. Халĕ вăй хумалли вăхăт. Вăраха яма юрамасть. Суя тĕн пĕтесси çывăх! (Софония 2:2, 3).**